27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
7
ЭРНЕКУН
133(6628) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем паян, июлĕн 5-мĕшĕнче, танковăй соединенисем, утлă çар тата пехота çав тери хăвăрт атакăланипе пула, МОЛОДЕЧНО хулипе пысăк чугун çул узелне — нимĕçсен оборонин ВИЛЬНО хулипе ЛИДА хулине каймалли çулйĕрсене хӳтĕлекен пах а опорнăй пунктне — туртса илнĕ.

МОЛОДЕЧНО хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КРЫЛОВ генерал-лейтенантăн, ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникăн, ВОРОБЬЕВ генерал-майорăн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорăн çарĕсем; броне танковăй çарсен Маршалĕн РОТМИСТРОВАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОБУХОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ФОМИНЫХĂН, КРЕМЕР полковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, КУПИН майорăн, ШУККАКИДЗЕ подполковникăн, ЯБЛОКОВ подполковникăн танкисчĕсем; БРИКЕЛЬ генерал-майорăн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорăн кавалерисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн НЕФЕДОВĂН, БАРЫШЕВ полковникăн артиллерисчĕсем тата РАБИНОВИЧ полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсен тĕрĕсне яланлăха палăртса хăварас тесе, МОЛОДЕЧНО хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «МОЛОДЕЧНЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 5-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутăра, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, МОЛОДЕЧНО хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, МОЛОДЕЧНО хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 5-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем паян, июлĕн 6-мĕшĕнче, нимĕçсен оборонин питех те кирлĕ тĕреклетнĕ пунктне, чугун çулсен пысăк узелне КОВЕЛЬ хулине йышăнса илнĕ.

КОВЕЛЬ хулине илессишĕн пынă çапăçусенче ГУСЕВ генерал-лейтенантăн, АНАШКИН генерал-майорăн, КУЗЬМИН генерал-майорăн, ЦВИНТАРНЫЙ полковникăн, БУЛГАКОВ полковникăн, ВЫДРИГАН полковникăн, ЧЕРНОВ генерал-майорăн, ЗАИКИН полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ГОДИНĂН, артиллери генерал-майорĕн БИТЮЦКИЙĔН, ЕЛОВАЦКИЙ полковникăн, БАЛАГУРОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОЛЫНИНĂН, ГРАЩЕНКО полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн летчикĕсем тата КИСЕЛЕВ полковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, СОКОЛОВ майорăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсен тĕрĕсне яланлăха палăртса хăварас тесе, КОВЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «КОВЕЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 6-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КОВЕЛЬ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, КОВЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 6-мĕшĕ.

Мухтава тивĕçлĕ колхозник

Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхозра Николай Павлович Павлов 8 çул хушши ĕнтĕ старши конюх пулса ĕçлет. Вăл мĕнле ĕçленине çак тĕслĕх лайăх кăтартса парать: «Заря» колхоз Отечественнăй аслă вăрçă пынă çулсенче кăна Хĕрлĕ Çара 28 лаша пачĕ. Вĕсене пурне те Николай Павлович пăхса çитĕнтернĕ.

Николай Павлович ватă ĕнтĕ. Унăн 4 ывăлĕ фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ совет офицерĕн хисеплĕ ятне илме тивĕç пулчĕç. Чи кĕçĕнни, Илья Николаевич—вăрçăччен учитель пулса ĕçленĕ. Вăл лăпкă та ăшă кăмăллă çынччĕ. Анчах вăрçă лăпкă учительрен тăшмана хурлайман хаяр çын туса хучĕ. Вăл нимĕç вăрă хуракĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерет, унăн çамрăк кăкăрĕ çинче 3 орден ялтăраса тăраççĕ. Правительство ăна: «Хĕрлĕ Ялав», «Отечественнăй вăрçăн» 1-мĕш степень орденĕсене тата «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденне парса наградăланă. Халĕ вăл майор.

Унăн ашшĕ хăйĕн паттăр ывăлĕсене тивĕçлĕ ĕçлет. Вăл яланах витере.

Государствăн виççĕмĕш Военнăй Займне Павлов юлташ 8 пин тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине те çийĕнчех парса татрĕ.

Кăçал çураки вăхăтĕнче уйрăм колхозсен вăрлăхлăх тырă çитменнине курса, Николай Павлович çапла каларĕ: «Халĕ вăрçă пынă вăхăтра колхозăн пĕр гектарĕ те акăнмасăр юлмалла мар, çавăнпа колхоза кашнинех пулăшас пулать», — терĕ. Унăн сăмахĕ пушă пулмарĕ. Вăл хăйĕн колхозне вăрлăхлăх 37 пăт, «Знамя Октября» колхоза — 30 пăт, «Победа» колхоза 30 пăт тырă парса пулăшрĕ.

Мухтавлă колхозникăн Павлов юлташăн кăкăрне те «Отличник социалистического сельского хозяйства» медалĕ илемлетсе тăрать.

— Хĕрлĕ Çар ретĕнче эпĕ пăхса çитĕнтернĕ тăватă ывăлăм çапăçаççĕ, вĕсем тăшмана аркатса тăкассишĕн хăйсен пурнăçне те хĕрхенмеççĕ. Эпĕ ватă çын, мана совет влаçĕ çĕç çын турĕ, вăл ман ывăлсене те çын ретне тăратрĕ. Çавăнпа та эпĕ Тăван çĕршывăшăн камăн пĕтĕм вăя пама хатĕр,—тет Николай Павлович Павлов юлташ.

Е. ТИМОФЕЕВА.

Ӳкерчĕк çинче: Грузи ССР-ĕнчи Цхалтубски районри Комсомол ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чей çулçисене пухаççĕ.

П. ЛУЦЕНКО фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 4-мĕшĕнче КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем ПЕТРОЗАВОДСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ЭССОЙЛА, ЛАМБИСЕЛЬГА, КОЧУРА, КОЙВУСЕЛЬГА, НАРМЕЛИСТО, КОВЕРО, МИЙНАЛЫ ятлă ялсем тата ЭССОЙЛА чугун çул станцийĕ.

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, июлĕн 4-мĕшĕнче ПОЛОЦК хулипе паха чугун çул узелне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра Вилейка облаçĕнчи район центрĕсем — ДУНИЛОВИЧИ хули тата МИОРЫ, МЯДЕЛЬ ятлă ялсем, ВОРОПАЕВО чугун çул узелĕ, ТРУДЫ, ДУБОВО, НОВГОРОДЫ, ТРАБОВЩИЗНА, БЕЛЬНИ, НОВО-ДРУЦК, ОХОБНЯ ятлă пысăк ялсем тата ПОЛЕВО, КОНСТАНТИНОВ, ДВОР, НОВОДРУЦК ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 350 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра Вилейка облаçĕнчи район центрĕсем — РАДОШКОВИЧИ хули тата КРИВИЧИ ятлă ял, Минск облаçĕнчи район центрĕ ЗАСЛАВЛЬ хули, ГОРОДИЩЕ, НАРОЧЬ, РУЧИЦА, МОРОСЬКИ, ВЯЗЫНЬ, ВЕЛЬКЕ, СЕЛО, РОГОВО, РАТОМКА, ВОЛКОВИЧИ, ШИТОМИЛИЧИ ятлă пысăк ялсем тата КОЛОДИЩИ, ЗДАНОВИЧЕВО, РАТОМКА, КРЫЖОВКА, БЕЛАРУСЬ, РАДОШКОВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БАРАНОВИЧИ хули енче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Минск облаçĕнчи район центрĕсене РУДЕНСК хулипе УЗЬМА ялне, Барановичи облаçĕнчи район центрне КЛЕЦК хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПЕРЕЖИР, УЗНЯНЫ, ЯЧЕНКА, МОГИЛЬНО, БРАТКОВО, НОВОСЕЛКИ ятлă пысăк ялсем тата ДРИЧИН, РУБЕНСК, СЕДЧА, МЫХАНОВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсем. Вăрмансене тăшмантан тасатнă чухне БОБРУЙСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕç офицерĕсен 60 çынтан тăракан ушкăнне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче — 35-мĕш армейски корпусăн командирĕ Лютцов генерал-лейтенант.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июлĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 45 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ВИЛЬНО ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Вильно чугун çул узелне тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пула, нимĕçсен виçĕ çар эшелонне пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Чугун çул узелĕнче 15 тĕлте пушар тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Вагонсемпе платформăсем, çавăн пекех тата тăшманăн çар склачĕсем çуннă.

ИЮЛĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 5-мĕшĕнче КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем наступлени туса пынă. Карело-Финн ССР-ĕн район центрне САЛЬМИ ятлă яла тытса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем июлĕн 5-мĕшĕнче, вирлĕн атакăласа, МОЛОДЕЧНО хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ВИЛЕЙКА облаçĕнчи район центрĕ СМОРГОНЬ хулипе чугун çул станцийĕ, ЧЕРЕМШИЦЕ, МОКШИЦА, СЛОБОДА, МИШУТЫ, МИЦКЕВИЧИ, ОЛЕНЕЦ, БЕЛЕВО, ВЕНЗЕЛЕВО, РАКОВ, ВОЛМА ятлă пысăк ялсем.

МИНСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăрта-рахра пирĕн çарсем малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ДЕМИДОВИЧИ, ЛЕДНИКИ, САМОХВАЛОВИЧИ, ПЯТЕВЩИНА, СКВОРЦЫ, ДОБРЫНЕВО, КОРМА, ДАНИЛОВИЧИ ятлă пысăк ялсем тата КОЛЯДИЧИ, ВОЛКОВИЧИ, ФАНИПОЛЬ ятлă чугун çул станцийĕсем. МИНСК хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен хупăрласа илнĕ 12-мĕшпе 27-мĕш армейски корпусĕсен тата 39-мĕш танковăй корпусĕн юлашкийĕсене пĕтерсе пынă.

БАРАНОВИЧИ енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ЛОГВИЩЕ, КАМЕНКА, КУХТИЦЫ, КВАЧЕ, ЯДВЕЖ, ШЕВЕЛЕ, ЗУБЕЛЕВИЧЕ, СИНЯВКА, ЛОПАТЫНЕ ятлă ялсем.

ПРИПЯТЬ шывĕн вăтам тăрăхĕнчи районра МОЗЫРЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Полесье облаçĕнчи район центрне ТУРОВ хулине, СТАРУШКИ ятлă чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ГЕРМАНОВА СЛОБОДА, НОВОСЕЛКИ, БОБРИК, МИХЕДОВИЧИ, КОПЦЕВИЧИ, БРИНЕВ, ДОРОШЕВИЧИ, ЛАСКОВИЧИ, РУДНЯ, БОРКИ ятлă пысăк ялсем тата ФИЛИППОВИЧИ, ЗАПОЛЬЕ, МУЛЯРОВКА, КОПЦЕВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 28 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БАРАНОВИЧИ, ЛИДА, ВИЛЬНО ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАПĂННИ

Июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Барановичи, Лида, Вильно чугун çул узелĕсене тапăннă, тăшманăн çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Барановичи узелĕнче ăна тапăннă вăхăтра нимĕçсен 10 эшелонĕ тăнă. Бомбăсем пăрахнипе пула, 20 тĕлте пушар тухнă. Бомбăсем тĕл лекнипе горючи склачĕ тата боеприпассен эшелонĕ сирпĕнсе кайнă.

Лида тата Вильно чугун çул узелĕсенче, бомбăсем пăрахнипе пула, пушарсем нумай тухнă. Çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсемпе платформăсем, горючи склачĕсем тата нимĕçсен çар пурлăхĕ çуннă. Пушарсем вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆ ☆

Карели фрончĕн çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине сире-сире ярса, çаплах наступлени туса пынă. Пялоярви ятлă ял районĕнче пирĕн пĕр чаçăн подразделенийĕсем финсен пĕр батальонне хупăрласа илнĕ те ăна пĕтерсе тăкассишĕн çапăçаççĕ. Пирĕн тепĕр часть, ăнăçлăн малалла куçса пырса, тăшманăн 900 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Пирĕн çарсем вăйлăн çапăçса тăшманăн Тулема-Йоки шывĕ тăрăх пыракан оборонине çĕмĕрнĕ, унăн Ладога кӳлли хĕрринчи Сальми ятлă пысăк опорнăй пунктне тыса илнĕ.

* * *

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Совет чаçĕсем Молодечно хулин хĕвелтухăç хĕррине çитнĕ те тăшманăн çав хулари гарнизонĕпе çапăçма тытăннă. Çав вăхăтра танковăй тата кавалери подразделенийĕсем, хуларан çурçĕр-хĕвеланăç енĕпе иртсе кайса, нимĕçсене вирлĕн атакăланă. Урамри хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем Молодечно хулипе чугун çул узелне илнĕ. Тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ.

Вилейка хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕçсем çав участока тин çеç пынă авиаполевой тата пехотнăй дивизисене çапăçава кĕртсе янă, Вилия шывĕ çинче тытăнса юлма хăтланнă. Совет боецĕсем Сморгонь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çав шыв урлă каçнă та çав хулана хӳтĕленĕ нимĕç çарĕсен флангне пырса тухнă. Каçалапа пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине сирсе янă та ахаль çулсемпе шоссе çулĕсен пысăк узелĕ пулса тăракан Сморгонь хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ.

Минск хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăста маневрсем туса, тăшман тылне пыра-пыра тухаççĕ те унăн опорнăй пункчĕсене аркатаççĕ. Паян ирхине совет чаçĕсем ахаль çулсен паха узелне Раков хулине тытса илнĕ. Çав районра икĕ кун хушшинче 2.700 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 65 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă тата 1.000 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. 13 танк, 224 автомашина тата боеприпассен, хĕçпăшалсен, апат-çимĕçĕн нумай склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Минск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем вăрмансене тăшмантан тасатнă чухне нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, çав шутра—1.500 автомашина ытла. Минск хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Çав группировка нимĕçсен пĕр армейски тата пĕр танковăй корпусĕсен юлашкийĕсенчен тăрать. Пирĕн артиллеристсемпе пехотинецсем нимĕçсен каялла чакмалли пур çулĕсене те татса пăрахнă, хупăрласа илнĕ ушкă майĕпен хĕссе пыраççĕ. Тăшман калама çук пысăк çухатусем тӳсет. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе ушкăнĕ хирĕç тăма пăрахнă та тыткăна парăннă.

Минск хулинчен хĕвелтухăçнерехре нимĕçсем çулсем тăрăх питĕ нумай танксем, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем, хир тупписем, зенитнăй тупăсем, танксене пемелли тупăсем, автомашинăсем пăрахса хăварнă.

* * *

Барановичи енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, нимĕçсен оборонин опорнăй пункчĕсене пыра-пыра çапаççĕ. Пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă, çав шутра—Барановичи хулинчен 25 километр хĕвелтухăçнерехре тăракан Шевеле ятлă ял. Пĕр соединени боецĕсем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне, 3 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 туппине пĕтерсе тăкнă, 17 хир туппине, ултă кĕпçеллĕ 5 миномётне тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

Молодечно

ÇАПĂÇУРИ ÇАР, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Молодечно хулине нимĕçсем питĕ вăйлă крепость туса хунă. Çав крепость Вильно хулипе Лида хулине каякан çулсене пӳлсе тăнă. Унта тăшман çарĕсен, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пыра-пыра çапнипе Березина шывĕ рубежĕнчен каялла чакаканскерсен, аркатса тăкнă юлашкийĕсене пухнă пулнă. Гитлеровецсем, пысăк çухатусем тӳснĕ пулин те, çав Молодечно патне пымалли вырăнсене вăйлă хӳтĕленĕ. Анчах та пирĕн чаçсем хăсене вĕсен рубеж хыççăн рубеж хăварса пымалла пулнă. Совет подразделенийĕсем хула патне çывăхарнă та хулан хĕвелтухăç хĕрринче çапăçма пуçланă.

Пирĕн çĕр сичи çарсене авиаци вăйлă пулăшса тăнă. Зенитнăй артиллерин вăйлă вут-хĕмĕ урлă каçса, совет бомбардировщикĕсем кашни 10—15 минутăран тăшманăн опорнăй пункчĕ патне тĕрлĕ çӳллĕшре вĕçе-вĕçе пынă, инженерла сооруженисемпе чугун çул эшелонĕсем çине бомбăсем тăкнă.

Вырăн шурлăхлă пулни, мина хирĕсем туса тултарни тата нимĕç артиллерийĕн вут-хĕмĕ хула патне хĕвелтухăç енчен пыма кансĕрленĕ. Тăшман оборонине лайăх тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн совет танкисчĕсемпе кавалери вара çавăрса илмелли маневр тунă та паян, вирлĕн атакăласа, Молодечно хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ.

Пирĕн танковăй чаçсемпе ытти çăмăллăн куçса çӳрекен чаçсем, наступлени туса пырса, Сморгонь хулине тытса илнĕ. Çав хулашăн пынă çапăçусенче летчиксем танкистсемпе ăнăçлăн сыхăнса кĕрешнĕ. Авиаци подразделенийĕсем тăшмана сывлăшран пыра-пыра çапнă çеç мар, вĕсем тата кирлĕ вăхăтра танксене горючи те илсе пырса панă. Самолетсем танковăй чаçсем кĕрешекен район тĕлне вĕçе-вĕçе пынă та ятарласа тунă баллонсемпе бензин пăрахнă.

Сморгонь хулине тытса илсе, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Молодечно районĕнчен Вильно патнелле каякан тăшман эшелонĕсен каялла чакмалли çулне пӳлсе лартнă.

Молодечно хулинчен хĕвеланăçнерехре халь çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ, анчах та совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе вĕсен каялла чакма лекет.

И. ПУХОВ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн IX-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра парти ретне илес ĕçĕн 1944 çулхи иккĕмĕш кварталти итогĕсем çинчен партин хула комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташ доклад туса пачĕ.

Хулари парторганизаци кăçалхи иккĕмĕш квартал хушшинче ВКП(б) ретне 168 çынна илнĕ. Вăл шутра 52 рабочи. Парторганизаци секретарĕ пулса Халапсин юлташ ĕçлекен госпитальри, тир-сăран комбиначĕнчи пуçламĕш парторганизацисем начар мар ӳснĕ.

Анчах та малта пыракан çынсене парти илес ĕçре чылай çитменлĕхсем пур. Хулари 49 пуçламĕш парторганизаци (кирпĕч заводĕнчи, пир-авăр тĕртекен фабрикăри, хулари апат-çимĕç комбиначĕнчи, табак фабрикинчи т. ыт. те) отчетлă тапхăрта пĕр çынна та ВКП(б) ретне илмен. Пысăк заводсенчи парторганизацисем парти ретне производственниксене, рабочисене илессине лайăхлатнă пулсан, Росглаввино совхозĕнчи, торф кăларакан предприятири, Иванов юлташ парторганизаци секретарĕ пулса ĕçлекен заводри пуçламĕш парторганизацисем рабочисене партие илес тĕлĕшпе начах та çителĕксĕр ĕçленĕ. Хăшпĕр парторганизацисем ВКП(б) членĕн кандидачĕсене, çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ, çамрăк коммунистсене парторганизацин практикăллă ĕçне çителĕксĕр явăçтараççĕ.

Комсомолăн хулари организацийĕ те çителĕксĕр ӳснĕ. Иккĕмĕш кварталта комсомол ретне пурĕ те 163 çамрăка çеç илнĕ.

Чылай пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе сӳрĕклетнĕ. Вĕсем малта пыракан комсомолецсене парти ретне суйласа илес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Ислюков юлташ докладĕ тăрăх пренире пуçламĕш парторганизаци секретарĕсем Фролов, Гентовенко юлташсем, Трусова (ВЛКСМ хула комитечĕ), Леонтьев (хулари прокурор) тата Юткевич юлташсем тухса каларĕç.

Пленум çавăн пекех тата хулари шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрлени çинчен хулари сутĕç пайĕн заведующийĕн Кириллова юлташăн докладне сӳтсе яврĕ.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсенче вĕренекенсен пĕлĕвĕпе культурăлăхĕ ӳсни, вĕсем çирĕп пĕлӳ илни палăрчĕ. Шкул тулашĕнчи ĕç те лайăхланнă. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем чылай ӳснĕ.

Шкул ĕçĕн пахалăхне çĕклемешкĕн арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентме тытăнни, вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли йĕркене ĕçе кĕртни, пĕлӳ пахалăхне баллсемпе хакламалла туни тата шкулсенче вĕренӳ ĕçĕнче ăмăртăс йăлана тăрахăçа кăларни чылай пулăшрĕç.

Анчах та шкулсем пурне те вĕрентмелли закона тата вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли йĕркене пĕтĕмпех çирĕппĕн пурнăçа кĕртеймен-ха. Историе, СССР Конституцине, химие, физикăна тата çар ĕçне вĕрентессинче çитменлĕхсене пĕтермен. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем хăйсен ĕçне ВЛКСМ Центральный Комитечĕн 12-мĕш пленумĕн решенийĕсене тивĕçлĕ çĕнетсе лайăхлатман.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси те çителĕксĕр пырать. Вăл ĕçе учительсене, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене, шефа илекен предприятисене явăçтарман.

Кириллова юлташ докладĕ тăрăх пренире Киреева (Когиз), Богатырева (хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ шкулĕ), Ковалева (Хула совет исполкомĕ), Макаров (Çутĕç Халăх Комиссарĕ), Судаков (Чебторг), ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Романова юлташсем тухса каларĕç.

Пленум икĕ ыйту тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум Н. П. Енчиков юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, ВКП(б) горкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕнчен хăтарчĕ тата ВКП(б) хула комитечĕн бюро составĕнчен кăларчĕ. Пленум ВКП(б) хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма М. К. Арламатский юлташа суйларĕ, ăна хула комитечĕн бюро членне кĕртрĕ.

Пленумра ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Белков, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логвин, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева, Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов юлташсем пулчĕç.

ТАНКСЕМПЕ САМОЛЕТСЕМ ТУМА

Республикăри колхозсенче Хĕрлĕ Çар валли танксемпе самолетсем тума укçа пухасси кунран кун сарăлса пырать. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем ĕçлесе пуянланнă укçăна темиçе пиншер тенкĕ пани çинчен калакан хыпарсем кунсеренех килеççĕ.

Шăхасан районĕнчи Вăрман Енĕшри «Свобода» колхоз членĕсем çĕнтерӳ фондне 100.000 тенкĕ укçа, 45.000 тенкĕлĕх заем облигацисем пачĕç. Çавăн пекех Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те кĕске вăхăт хушшинчех 100.000 тенкĕ пухса пачĕç.

* * *

Октябрьски районĕнчи «Культура» тата «Молния» колхозсенче тăван çĕршывăн сумлă патриочĕ Ферапонт Головатый пуçарăвне тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума укçа пухас ыйтупа икĕ колхозăн пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Хĕрлĕ Çар ретне «Молния» колхозран кайнă гварди лейтенанчĕ Георгий Кузнецов летчик валли самолет туянма 100.000 тенкĕ укçа пухма йышăнчĕç. Кузнецова фронтра «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă.

Хăмла ĕрчетекен колхозра

Октябрьски районĕнчи «Красная Чувашия» колхозра хăмла ĕрчетес ĕнепе тăрăшса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çул кунта пĕр гектар çинчен 10 центнер хăмла пухса илнĕ. Çуркунне хăмла вырăнĕнче ĕçлеме ятарласа бригада турĕç. Бригадăра ĕçлекенсем хăмла вырăнне 20 тонна тислĕк тăкнă, ăна вĕлтренсемпе çумкурăкĕсенчен тасатнă. Кăçал кашни гектартан 12 центнертан кая мар хăмла пухса илессишĕн кĕрешеççĕ. Бригадăна 57 çулхи колхозник Т. Мотнов юлташ ертсе пырать.

Çуркунне çак бригада членĕсем хăйсен участокĕнчен 77.000 хăмла тымарĕ кăларса нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене ярса панă.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Красноармейски МТС-ĕ комбайнсене юсас ĕçе вĕçлерĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Çурхи вăхăтĕнче трактор-семпе тухиччен ĕçсем анăçлă вĕçленĕ хыççăн, эпир МТС-ри комбайнсене юсаса тытăнтăмăр. Комбайнсене итти машинăсене юсас ĕçе комбайнерсемпе слесарьсем тата токарьсем пĕрлешĕнне ăмăртса, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Енер МТС-ра комбайнсем пĕтĕмпех юсаса пĕтертĕмĕр. Государство комиссийĕ комбайнсене йышăнса илчĕ. Пирĕн МТС-ра пурĕ 12 комбайн, вĕсене пурне те колхозсене кăларса ятăмăр. [illegible]

Комбайнсене юсас ĕçре уйрăмах комбайнер В. Гаврилов юлташ лайăх пример кăтартрĕ. [illegible] Комбайнер Александра Антокова юлташ та хăйĕн комбайнне срокчен юсаса пĕтерсе, [illegible]

Комбайнсене пĕрлех молотилкăсене юсас ĕçе те анăçлă туса пытăмăр. Пирĕн пурĕ 13 молотилка, вĕсенчен 11-ăшне юсаса пĕтерчĕ, государство комиссийĕ йышăннă, тата 2-мĕш пайне юсаса пĕтерттерчĕ. Тырă тасатакан машинăсене юсасси те анăçлă пырать.

Çак отлăтлă ĕçсене тунă хыççăн, комбайнерсем [illegible] Павлов юлташ [illegible] стахановецĕ Г. Р. Гаврилов юлташ [illegible] тухса калать.

— Пĕтнĕ çул эпĕ 83 гектар пусăс выранне 222 гектар пухрăм, — терĕ Павлов юлташ. — Кăçал эпĕ 250 гектар пухма обязательство илтĕм. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем пире кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме хушаççĕ. Тăшмана аркатса тĕкма Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе хам çине илнĕ обязательствăна срокчен тата пысăк палăрăлăхпа пурнăçлама пулăштăп.

А. Антохова юлташ хăйĕн комбайнĕпе 200 гектар пухма сăмах пачĕ, итти комбайнерсемпе трактористсем те конкретлă обязательствосем илчĕç.

А. КОНСТАНТИНОВ.
МТС директорĕ.

Утă сулма халĕ те тытăнман

Пĕтрĕс районĕнчи колхозсем иртнĕ хĕлле вылĕхсем апачĕ çитмен пирки нумай чăтăмаланă. [illegible] утă хатĕрлес ĕçе [illegible] тăрăшса ĕçлессĕ.

Районĕпе пурĕ 976 гектар клевер çулмалла пулнă, пĕлтĕр 761 гектар çулса тикĕтнĕ тата капана хывнă. Улăх çаранĕ 500 гектар çулмалла, паянхи кун та 78,3 процентне çулса пухнă. «Герой» колхоз—52 гектар, «Красный фронтовик» колхоз—51 гектар, «Путиловка» колхоз 50 гектар утă лайăх пухса хунă.

Нумай колхозсем [illegible] çулса пухнă хыççăн вăрмансенчи уçланкăсене утă çулассĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе «Путиловка» тата малта пыракан итти колхозсем те азан ĕçлессĕ.

Анчах та çавăн колхозсем уяр кунсенче кирлĕ пек усă курмаççĕ. Районри 11 колхоз утă çулма халĕ те пуçăнман. Вылĕхсене валли итти хатĕрлессе çав уйăрмах «Правда» колхоза начар пырĕ. Кунта 115 тонна силос хывмалла, 11 тонна витаминлă апат хатĕрлемелле, 63 лав çăка милĕкĕ пухмалла. Кунта нимĕн те туман, утă çулма тухман. Колхоз председателĕ Кирилов юлташ: «Силос хывма курăк кĕске-ха», тесе ответлет. Çавăн пекех «1-ме Мая», «Красная звезда», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те утă сулас ĕçе чăтма çук тăсаççĕ.

П. КУРАКОВ.

Пĕр ялсоветĕнчи колхозсем

ИНЗЕРЕ. Пĕтремĕн Аннио ялсоветĕнчи «20 лет Чувашии» тата Андреев ячĕпе тăракан колхозсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Икĕ колхозĕнче те халь колхозниксем хĕрсех утă çулаççĕ. [illegible] çĕ. Çĕртме пуссине вĕсем 1.400 лав тислĕк кăларнă. Андреев ячĕпе тăракан колхоз 45 тонна, «20 лет Чувашии» колхоз 30 тонна силос хывнă. Çак ĕçсене тунă вăхăтрах колхозниксем хĕлле валли ферма суртĕсене юсаççĕ.

Агитаторсем ĕçĕн результатне палăртса пыма кăтарту тата Хисеп хăмисем тунă. Колхозсенче стена хаçачĕсем, бригадăсенче боевой листоксем кăларса тăраççĕ. Колхозниксене куллен фронтри çĕнĕ хыпарсемпе паллаштараççĕ.

«Красный фарт» тата Папанин ячĕпе тăракан колхозсем те çак ялсоветĕнчех ĕçлессĕ. Вĕсем çĕртме суххине [illegible] графика тултарса пырайман. Ку колхозсем вылĕхсене валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе те нимĕн те туман, силос хывма тытăнман. Ытти ĕçсем те вăрахăн пулса пыраççĕ.

Ку колхозсем те пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Анчах вĕсен ăмăртăвĕ хут çинче кăна. Ку ĕнтĕ колхоз председателĕсемпе бригадирсем социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе организацилеменнине пĕлтерет. Пĕр ялсоветри колхозсен пĕр-пĕринчен юлса пыма нимĕнле сăлтав та çук. Юлса пыракан колхозсен малтисен опычĕпе ĕçлеме вĕренсе пымалла.

Г. СЕРЕБРЯКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлеме тăрăшмаççĕ

ЭЛĔК, июлĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Куракăшри «Безбожник» колхоз иртнĕ çул выльăхсене валли çителĕклĕ таран выльăх апачĕ хатĕрлеймерĕ. Çавна пула хĕлле апат çук пирки выльăхсем нумайĕшĕ начарланчĕç, вилнисем те пулчĕç. Апла пулин те колхоз руководителĕсем выльăх апачĕ хатĕрлес пирки кăçал та нимĕн те тумаççĕ. Колхозниксем йышăннă тăрăх, колхоз 190 тонна силос, 43 лав милĕк, 12 центнер арăмути, 10 центнер вĕлтрен, 14 тонна витаминлă утă хатĕрлемелле. Анчах халĕ вĕсене нимĕн чухлĕ те хатĕрлемен.

— Кĕркуннеччен вăхăт нумай-ха, ĕлкĕрĕпĕр, — тесе лăпланса ларать колхоз председателĕ Силин юлташ.

Изванкăри «13 лет РККА» колхоз 120 тонна силос хывмалла, 18,7 центнер витаминлă апат хатĕрлемелле. Анчах кунта та çак ĕçе пуçăнман-ха.

— Куракăсем çитĕнчĕр-ха, — тет колхоз председателĕ Денисов юлташ.

«Прожектор» колхозра (председателĕ Андреев юлташ) силос хывмашкăн висĕ шăтăк тасатса хатĕрленĕ, пĕрне куракăсем тураса тултарнă. Анчах та юлашки кунсенче пулса иртнĕ вăйлă çумăрсем çак шăтăка шыв тултарса, силослăх курăка йăлтах пăснă.

Силос хывасси районри пур колхозсенче те начар пырать, ахальтен мар ĕнтĕ июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне силос хывмалли плана район пурĕ те 18 процент кăна тултарнă. Утă çулас ĕç те çителĕксĕр пырать. 2.233 гектар вырăнне паянхи кун тĕлне 253 гектар çеç çулнă. 26 колхоз утă çулма пачах та тытăнман.

Райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Владельщиков юлташ хăй те васкамасть, ĕлкĕрĕпĕр-ха, тесе лăплантарать.

Х. ЛИСИН.
(Хамăр корр.).

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкарти эрех заводĕнчи стахановкăсем (сулахайран сылтăмалла): **А. Захарова, Е. Егорова** тата **Е. Филиппова** юлташсем. Вĕсем ĕç нормине яланах 200 процент таран тултараççĕ.
Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çамрăксен бригадисене преми пана

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра комсомолецсемпе çамрăксен бригадисен социализмлă ăмăртăвĕн июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Карташова, Матвеева, Колотылина юлташсен бригадисем пĕрремĕш вырăна тухнă. Вăл бригадăсен бригадирĕсене кашнинех костюм парса премиленĕ. Иккĕмĕш вырăна Еслюкова, Романченко, Гильберг юлташсен бригадисем йышăннă. Вĕсене кашнинех пальто çĕлемелли пусмăтавар парса премиленĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Малта пыракан цехсем çулталăкри плана тултарчĕç

Пирĕн Йĕпреçри «Красный строитель» артель коллективĕ, Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса ĕçлесе, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çурçулти плана 135,3 процент тултарчĕ, плансăр иртерсе 47,3 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Июнь уйăхĕнче артельте çĕнĕ производствăсем ĕçе кĕртнĕ. Колхозсене уборкăна хатĕрленме пулăшма Çĕнĕ Çуращри «Ударник» колхозра транспорт инвентарĕсене юсакан мастерской уçнă. Çак кунсенче тата Кĕлĕмкассинчи «Красный фронтовик» колхозра мастерской уçатпăр. Вĕсемсĕр пуçне артельре çĕнĕрен çĕвĕ çĕлекен мастерской уçса ĕçе янă, вăрмантa мунчалалăх çăка касас ĕçе организациленĕ.

Артельре тăм чашăксем тăвакан цехăн тата тимĕрç цехĕн коллективĕсем уйрăмах лайăх ĕçлессĕ. Çак цехсем июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана иртерсе тултарчĕç. Çулталăкри плана тăм чашăксем тăвакан цех 117,3 процент, тимĕрçĕ цехĕ 113,8 процент тултарчĕç. Вăтă мастерсем Степан Фадеевпа Сергей Акимов, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Иван Корчагин, 15 çулхи çамрăк мастер Александр Кассихин, тимĕрçĕсем Илья Ташов, Анна Егорова ĕç нормине куллен 300 процента çити тултарса пыраççĕ.

Эпир ĕçре тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларамастпăр. Пирĕн артель коллективĕ, пĕрремĕш çурçулти ĕçсен итогĕсене сӳтсе явнă хыççăн, чаплă çĕнтерӳсем тăвакан Белоруссии фронтĕнчи çарсене июль уйăхĕнчи плана 150 процент тултарнипе ответлеме сăмах пачĕ.

Д. МИХАЙЛОВ,
«Красный строитель» промартель председателĕ.

Полиграфи промышленноçĕ çур çулхи плана иртерсе тултарнă

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Полиграфи промышленность управленийĕн предприятийĕсем çур çулхи плана 119,9 процент тултарнă. Уйрăмах Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ типографи лайăх ĕçленĕ. Вăл çур çулхи плана 128,4 процент тултарнă.

„Вăрçăри чи чаплă çĕнтерӳсенчен пĕри"

ХĔРЛĔ ÇАР СОВЕТ БЕЛОРУССИН СТОЛИЦИНЕ МИНСК ХУЛИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ÇИНЧЕН АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Белоруссин столицине Минск хулине Совет çарĕсем ирĕке кăларни çинчен калакан хыпар Англире питĕ савăнтарнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине тухнă хаçатсенче çав çĕнтерӳ çинчен пичетленĕ пĕлтерӳсен заголовокĕсем çав хыпара Англире мĕнле савăнса кĕтсе илнине палăртаççĕ. Хĕрлĕ Çара хĕвеланăçнелле куçса пыма чармашкăн нимĕçсем Минск хулине вăйлă çирĕплетнĕ. Çав хула час парăнни ĕнтĕ Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Германи оборони йĕркерен тухнине кăтартса парать, тесе шутлаççĕ Англи хаçачĕсем.

«Дэйли мэйл» хаçат Минска Хĕрлĕ Çар йышăннине «вăрçăри чи чаплă çĕнтерӳсенчен пĕри» тесе шутлать. «Германи çарĕ ĕнтĕ арканса пырать», тет.

«Хĕвелтухăç фронтĕнче, — тесе çырать «Таймс» хаçат, — паян Германи çарне мĕнле аркатнине курма пулать».

«Дэйли телеграф энд Морнинг пост» хаçат çакна палăртать: Белоруссири çапăçусен тĕп палли — Германи çарĕ питĕ пысăк çухатусем тӳсни пулса тăрать. Германин 200.000 ытла салтакĕпе офицерне пĕр эрне ытларах çеç вăхăт хушшинчех пĕтерсе тăкнă.

Çав хаçатрах кăшт маларах пичетленĕ çар обозревателĕн статьинче çапла каланă: Хĕрлĕ Çар «хăйĕн чаплă çулĕпе малалла пырать». Хĕвелтухăçĕнчи çапăçу «тĕнчери чи татăклă çапăçусенчен пĕри пулса тăрать», тенĕ. «Дэйли экспресс» хаçатăн вăрçă обозревателĕ çапла çырать: вырăссем вăйлă пырса çапнине пула вăрçă часрах пĕтме пултарать, тет.

„Хĕрлĕ Çарăн ăста стратегийĕн результачĕ"

ХĔРЛĔ ÇАР МИНСК ХУЛИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ÇИНЧЕН АМЕРИКĂРИ ХАÇАТСЕМПЕ РАДИО МĔН КАЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Хĕрлĕ Çар Совет Белоруссин столицине Минск хулине ирĕке кăларни çинчен хыпар çитсенех, Америкăри радиостанцисем çав хыпара пĕлтермешкĕн хăйсен передачисене чарса лартнă.

Радиообозревательсем Хĕрлĕ Çарăн çав çĕнĕ пысăк çĕнтерĕвĕ вăрçăпа политика тата стратеги енчен пысăк çĕнтерӳ пулса тăнине палăртаççĕ. Комментатор Марио Берди Нью-Йоркри радиопа çапла каланă: Минска тытса илни савăнăçлă хыпар пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн Белоруссири наступленийĕ пек наступлени историре урăх пулман. Наступление ертсе пынă совет генералĕсен çав тери пысăк таланчĕ, вĕсем операцисене хăюллăн туни, çарсен шултăра вăйĕсене çапăçăва кĕртсе янă чухне мĕн пулассине туйса тăни,—çаксем ĕнтĕ çав наступление ăнăçлă туса хучĕç. «Германие хупăрласа илнĕ пĕлĕтсем хураласа, хăрушланса пыраççĕ, Гитлерпа унăн шайкки Германи халăхне темле чĕнсе калани те çав пĕлĕтсене сирсе яма пултараймасть».

Минск хулине йышăнни çинчен пĕлтернине ĕнер каçхи хаçатсенче пуринче те питĕ пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. Тепĕр кунне çав пĕлтерĕве ирхине тухнă мĕнпур хаçатсенче пĕрремĕш страницăсенче пичетлесе кăларнă. Ирхине тухнă хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çитĕнĕвĕ çинчен питĕ нумай çырнă.

Нимĕçсем 1941 çулта Минска тытса илнĕ хыççăн Хĕрлĕ Çара «пĕтерсе тăкрăмăр» тесе мухтанни çинчен астутарса, «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: халĕ Хĕрлĕ Çар, Минск хулине ирĕке кăларса, нимĕç çарне чăннипех пĕтерсе лартмалла пырса çапрĕ, тет.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: çак пĕтĕм тĕнчери кĕрешӳре мĕнпур союзниксен кунçулĕсем пĕр-пĕринпе питĕ таччăн çыхăннипе пула, Минск патĕнче çĕнтерни мĕнпур союзниксен çĕнтерĕвĕ пулса тăрать, тет. Çав хаçатăн çарти корреспонденчĕ Элиот çапла çырать: Минск хулине йышăнни Хĕрлĕ Çарăн ăста стратегийĕн результачĕ пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар хăйĕн пуçарулăхĕпе тата хăй тăшмантан вăйлăрах пулнипе туллин усă курнă, тет. Юлашкинчен вăл çапла çырать: Минск хулине йышăннă Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ часах вăрçă тĕлĕшпе пысăк результат парĕ, тет.

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНТЕРӲЛЛĔ НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН КАНАДĂРИ ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ОТТАВА, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ çинчен калакан хыпарсене курăнмалли вырăнта пичетлеççĕ. «Оттава ситизен» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла калать: «Гитлер, Наполеон пекех, çĕнтерме çук Российăна çĕнтерсе илме хапсăнчĕ, анчах та Гитлер Российăна пырса кĕни мĕнпе пĕтесси паллă ĕнтĕ».

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче ĕçсем мĕнле пыни çинчен Торонтора тухакан «Стар» хаçатăн вăрçă обозревателĕ Плюмен çапла çырать: «Совет çарĕсем пысăк çĕнтерӳ турĕç, çав çĕнтерӳ вăл вăрçă пĕтес срока нумай çывăхартĕ». Плюмен çапла шутлать: Белоруссире нимĕçсене пырса çапни Германин «никам çĕнтерейми» çарĕшĕн çав тери пысăк поражени пулса тăрать, ун пек поражение вăл халиччен нихăçан та тӳсмен. «Вăрçăсен историйĕнче 200.000 çынлă армие 8 кун хушшинчех пĕтерсе тăкма сайра-хутра çеç май пулнă», тесе çырать Плюмен.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Июлĕн 3-мĕшĕнче ирхине союзниксен çарĕсем Котантен çурутравĕн никĕсĕнче темиçе пунктра 2,5 миля малалла куçнă. Вăйлă çумăрсем çунă пирки сывлăш-çар вăйĕсем çĕр çинчи çарсене çителĕклĕ пулăшма пултарайман. Июлĕн 3-мĕшĕнче каç пулса килнĕ тĕлелле çанталăк кăштах юсаннă, вара истребитель-бомбардировщиксем тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене, артиллери позицийĕсене тата Лесс пунктĕнчи горючи складне ăнăçлă тапăннă. Одон шывĕ çинчи позицисене пирĕн çарсем хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 4-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Паян ирхине пирĕн çарсем икĕ пысăк атака тунă. Кан хули районĕнче вĕсем Байе хулипе Кан хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулĕн икĕ енĕпе те кăнтăрхĕвелтухăçнелле куçса пынă, Карпике пунктне туртса илнĕ. Халĕ çапăçу çак пунктри аэродромра пырать.

Союзниксен ытти чаçĕсем Одон шывĕ çинчи укреплении кăнтăр енчи флангĕнчен куçса пырса, темиçе миля малалла кайнă, Версон пунктне йышăннă, вара пирĕн сулахайра çапăçакан çарсемпе пĕрлешнĕ.

Котантен çурутравĕн никĕсĕнче союзниксен çарĕсем, кăнтăралла куçса пырса, паян ирхине Ла-Э-Дю-Пюа пунктран çурçĕртерехре выртакан çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Унччен малтан пирĕн çарсем Сен-Рями-Де-Ланд, Бланш-Ланд тата Ла-Потри пункчĕсем çывăхĕнче малалла куçса, самаях пысăк çитĕнӳсем тунă, вара çакăн хыççăн çав асăннă пахаçӳллĕ вырăна ăнăçлă штурмласа туртса илнĕ.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Котантен çурутравĕн тĕпĕнче каллех малалла куçнă. Çӳллĕ вырăнсенчи паха позицисене йышăнса тăракан тăшман хытă хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем пуринчен ытларах тинĕс хĕрринчи районра малалла куçнă. Сен-Никола-де-пьер-пон пункта тата Нефмениль пункта ирĕке кăларнă. Пирĕн чаçсем халĕ Ла-э-дю-кюи патне çывăхарса пыраççĕ.

Кан хули районĕнче тăшман хаяр контратакăсем тăвать. Карпикри позицисене эпир малтанхи пекех çирĕп тытса тăратпăр.

Июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен çыранри авиацийĕн самолечĕсем Дьепп хулипе Гравелин хули хушшинче пухăнса тăнă торпеда катерĕсене тата ытти суднăсене вăйлă тапăннă. Тăшманăн пĕр судни сирпĕнсе кайнă, ытти темиçе суднине сиенленĕ.

Июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине, начар çанталăк тăнă пирки, авиаци каллех вăйлах кĕрешеймен.

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕМ ТĂШМАНТАН ТЫТСА ИЛНĔ ХАТĔРСЕМПЕ ХĔÇПĂШАЛЛАНАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, нумаях пулмасть француз патриочĕсен 80 çынтан тăракан ушкăнĕ Арьож департаментĕнче Парьпи хулинчи жандармсен шкулне тапăннă. Шкул хуралне хĕçпăшалсăрлантарса, 200 жандарма шкул килхушшинче хупса лартнă та патриотсем шкулăн мĕнпур хĕçпăшалĕпе боеприпасĕсене хăйсемпе пĕрле хуларан илсе кайнă. Çакăн çинчен пĕлсен, француз патриочĕсен ытти пĕчĕк отрячĕсем те гитлеровецсене тапăнса вĕсен хĕçпăшалне туртса илме пуçланă. Фижеак хулинчен патриотсем темĕн чухлĕ хĕçпăшал илсе кайнă. Çав хĕçпăшала унччен кăна Дарнан полицийĕ 4 кун хушши склада турттарнă. Буссан хулипе Тулуза хулинче гитлеровецсен, патриотсем тапăнасран хăраса, тар тăвакан заводсен хуралне ирĕксĕрех нумай йышлăлатмалла пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Францирен çитнĕ хыпарсем тăрăх, партизансем Лавалĕн Хĕвеланăç Францири полицийĕн начальникне Надаль генерала тыткăна илнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КОРТОНУ ХУЛИНЕ ТУРТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем пĕтĕм фронт талккăшĕпе хăвăрт малалла куçса пыраççĕ. 8-мĕш армийĕн Тразимен кӳллинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан чаçĕсем Кортону хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата Лучинь-яна хулипе Маргапо пунктне йышăннă. Союзниксен малти чаçĕсем Ареццо хули патне çитессе мĕн пурĕ те 12 километр кăна тăрса юлнă. Тразимен кӳллинчен икĕ енĕпе çапăçса пыракан чаçсем халĕ пĕрлешнĕ. Перуджа хулинчен хĕвелтухăçнерехри сăртлă-туллă районра Сан-Северина тата Мателика хулисене туртса илнĕ. Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи участокра Музона шывĕ çинче тăшман контратакисене сирсе янă. 5-мĕш армийĕн француз чаçĕсем Сиена хулине туртса илнĕ хыççăн союзниксен çарĕсем çĕпĕрен малалла куçнă та Ареццо хулине каякан çула татнă. Сиена хулипе Тирренски тинĕс çыранĕсем хушшинчи участокра союзниксен çарĕсем пĕтĕм фрончĕпех темиçе километр малалла куçнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, ĕнер Румынири тата Белградри чылай объектсене тапăннă. Çапăçусен районĕнче тăшманăн моторизованнăй транспортне тата пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене атакăланă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Боснин хĕвеланăç, вăтам тата хĕвелтухăç пайĕсенче Югослави чаçĕсем пуçарулăха хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Дервента хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Сава шывĕ çинче тăшманăн пăрахутне тата çар пурлăхĕ турттарса пыракан икĕ катерне шыва путарнă. Хорватире Жумберак секторĕнче нимĕçсемпе усташасен пур атакисене те сирсе янă. Тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: иртнĕ çĕр акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Рур облаçĕнчи объектсене тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН ИЮНЬ УЙĂХĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан бомбардировщиксемпе истребительсем июнь уйăхĕнче ĕлĕкхи уйăхсенчен нумай хăвăтларах ĕçленĕ. Çак уйăхра вĕсем Европа çинче 50.000 вĕçеве яхăн тунă. Çав операцисенче вĕсем Германи çине 58.750 тонна фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Çапла ĕнтĕ, июнь уйăхĕнче Германи çине, вăтамăн илсен, кашни минутăра 1.300 килограмм бомба пăрахнă.

Американецсен авиацийĕн çав операцисенче 436 самолет пĕтнĕ, урăхла каласан, операцисенче пулнă самолетсен пĕр процентĕнчен те сахалтарах пĕтнĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 293 самолетне персе ӳкернĕ. Çĕр çинче пĕтерчĕ самолетсен шучĕ ку шутран нумай ытларах.

Американецсен Италири базăсенче тăракан 15-мĕш авиаци корпусĕн самолечĕсем Германие кăнтăр енчен пыра-пыра вăйлă çапнă. Июнь уйăхĕнче кăнтăрлахи бомбардировщиксем Берлин хулине питĕ хытă сиенленĕ.

Çак уйăхрах пĕрремĕш хут челночнăй ятлă тапăну пулнă. «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксем, Англирен вĕçсе тухса, Германири синтетически горючи завочĕсене, 4 авиаци заводне, авиаци двигателĕсен 5 заводне тата нимĕçсен чи пысăк танковăй базине атакăланă та Совет Союзĕнчи аэродромсем çине анса ларнă.

Тактикăллă операцисем туса, йывăр бомбардировщиксем Францири, Голландири тата Бельгири 70 аэродрома яхăн атакăланă.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ НИМĔÇСЕН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔ ВИЛНĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинри радио çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче йывăр аманнă хыççăн генерал-лейтенант **Вернер Рихтер** вилнĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ НОЕМФУР УТРАВĔ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем Ноемфур утравĕ çине пырса аннă. Ку утрав Голландин Çĕнĕ Гвинея утравĕн çыранĕсем патĕнчи Биак утравĕнчен 100 миля хĕвеланăçнерехре выртать. Утрав çине аннă чухне союзниксен çарĕсен нимĕнле çухатусем те пулман. Вĕсем утрав çинчи тăшман аэродромне унти кăштах сиенленнĕ 30 самолетпа пĕрле пер çапăçусăрах тытса илнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ САРАТСА ПУХНĂ ЫЛТТĂНА ЛИССАБОН ХУЛИНЕ КУÇАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат çапла пĕлтерет: иртнĕ эрнен юлашки кунĕсенче нимĕç самолечĕсем Берлинран Лиссабон хулине нумай ещĕк илсе пынă. Çав ещĕксенче ылттăн чăмаккисем пулнă, пĕтĕмпе темиçе миллион кĕрепенке стерлинглăх илсе пынă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Хĕрлĕ Çар воинĕсем вăйсене ӳстерсе ĕçлеме чĕнеççĕ

(Фронтовиксен çырăвĕсем тăрăх)

Хĕрлĕ Çар воинĕсем тылри фабрик-заводсене, колхозсемпе совхозсене тата МТС-сене кунсеренех çырусем нумай яраççĕ. Вĕсем хăйсен çырăвĕсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсен паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен çырса пĕлтерсе, рабочисемпе инженерла-техникла работниксене, колхозниксемпе колхозницăсене тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар хăватне ӳстерессишĕн, нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес сехете çывхартассишĕн вăйсене ӳстерсе ĕçлеме чĕнеççĕ.

Фронтовик **М. Алексеев** юлташ, вăрçă умĕн Тăвай МТС-ĕнче механик пулса ĕçленĕскер, МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем патне çапла çырать: «Эпир, Хĕрлĕ Çар воинĕсем, фашистла нимĕç захватчикĕсене хамăрăн тăван çĕршывран тĕп-йĕрĕпех тасатассишĕн [illegible] тытса çапăçатпăр. Совет çыннисен хастарлăхне пула, эпир кунта ним çитменлĕхне те туймастпăр. Анчах пурте çитешĕ тесе лăпланса ларма юрамасть. Тăшмана хăваласа пырса, хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтермелле тума вăйсене ӳстерсе ĕçлеми кирлĕ. Çавăнпа та эпир, фронтовиксем, сире, хисеплĕ тăвансем, тылра вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме чĕнетпĕр. Машинăсене лайăх пăхăр, вĕсен вăйĕпе туллин усă курăр, колхозниксене вăйлă тырпул туса илме пулăшăр. Эпир халăх умĕнче парăмра юлмăпăр, нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкăпăр».

Гвардеец-орденоносецсем **Н. Ступин, А. Воронин, Т. Маслов, В. Ларионов, К. Карпов, Клаковнин** тата **Лопатин** юлташсем, Шупашкар хулинчи комсомолкăсене хăйсем тăшмана хăвăртрах пĕтерес туйăмпа пурăнни çинчен пĕлтерсе, вĕсене çамрăк хастарлăха çĕнтерӳ тунă çĕре пама чĕнеççĕ. «Пирĕн ĕçе правительство пире орденсемпе медальсем парса паллă турĕ. Эпир хамăрăн пĕтĕм вăя, кирлĕ пулсан пурнăçа та, совет халăхĕн телейлĕхĕпе ирĕклĕхĕшĕн пама хатĕр. Сире те, хаклă туссем, çĕнтерӳ хĕçпăшалне тылра хастарлăн тунтама чĕнетпĕр. Хăвăрăн ĕçӳсем çинчен çырса пĕлтерме ыйтатпăр. Пирĕн адрес: Полевая почта 64003».

Çавăн пекех фронтовиксем **И. Исаев, В. Горшков, Е. Тихонов** тата ытти нумай юлташсем те, хăйсен çырăвĕсенче пирĕн земляксен паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен пĕлтерсе, чăваш ĕççыннийĕсене тылра хастарлăн ĕçлеме чĕнеççĕ.

Нумай боецсемпе офицерсем тылри ĕççыннисен пархатарлă ĕçĕсем çапăçура хавхалантарни çинчен ăшă кăмăлпа çырса пĕлтереççĕ. «Нумай пулмасть эпир,—тесе çырать **М. Трофимов** юлташ, — «Чăваш Коммуни» хаçатра чăваш ĕççыннисен ĕçĕсемпе паллашрăмăр. Тылри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшни пире чĕререн савăнтарчĕ. Вĕсен хастарлă ĕçĕ пире çапăçусенче хăюллă та паттăр пулма хавхалантарать».

Тылри агитаторсен хисеплĕ задачи — фронтран килекен çавăн пек çырусем çине тылри ĕççыннисен хастарлă ĕçĕ çинчен калакан çырусемпе ответлемелле тăвасси пулать. Фронтовиксен çырăвĕсемпе агитацилле-массăллă ĕçре анлăн усă курмалла. Вăл çырусем совет çыннисене патриотла туйăмпа хавхалантараççĕ, предприятисемпе колхозсенче çĕнĕ çитĕнӳсем тума вăй-хăват параççĕ.

Хресчен суртне çакăн пек работниксем кирлĕ: кĕçĕн регистраторсем, япаласем упракан пӳлĕмри дежурнăйсем, культработниксем, швейцарсем, гардеробщицăсем, дезинфекторсем, техниксем.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская, 7/16, Дом крестьянина. Тел. 5—43.

«Заготживсырье» конторине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: тĕрлĕ кайăксем ӳстерес ĕçе пĕлекен зоотехник, оперативнăй учет начальникĕ; тир-сăран, мамăклă тир, çăм ĕçĕсене пĕлекен специалистсем; бухгалтерсем тата çăмăл машинăпа çӳреме шофер кирлĕ.
Ĕçлеме илнĕ çынсене хваттер параççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 31. Телефоны 6—42, 2—61.

Чăвашпотребсоюза васкавлăн çакăн пек работниксем кирлĕ: оргротдел инструкторĕсем, кадрсен отделĕн инструкторĕсем, финанс, план тата суту-илӳ отделĕсенче ĕçлекен работниксем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашпотребсоюз, Отдел кадров.

Шупашкарти макарон фабрикине механик тата главнăй бухгалтер заместителĕ кирлĕ. Хваттер параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ тата ларек пур. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 29. Макаронная фабрика.

Чăвашзаготживконторăна ялан ĕçлеме бухгалтерсем, пункт заведующийĕ, инспекторсем, заготовительсем, секретарь-машинистка тата выльăх ăсатакансем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Учительская, 39.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
июлĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех акăлчансен
«БАГДАДСКИЙ ВОР»
ятлă çĕнĕ, илемлĕ, темиçе сăрпа ӳкернĕ фильмне кăтартать:
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Главнефтеснабăн чăваш управленийĕн строительствăра ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç йĕркелекен, бухгалтер, главнăй механик тата тĕрлĕ рабочисем.
Ĕçлеме илнисене хваттер тата пахчасем параççĕ. Ларек пур. Столовăй уçăлать. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом печати, 4-й этаж, комната № 44. Телефон 3—83. Главнăй инженертан ыйтмалла.
5—1.

Редакцин адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00243. Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.